К-13

„Канаш“ хаҫат ҫумĕнҫе тухат̆.

# КАПКӐН

5-мĕш №

## „Капкӑна“ ҫакланнисем.

### „Турӑ“ „копператтивĕ“, сĕрен йаракан пуп, Иван мучисем пайан капкӑна ҫакланӑ.

**Вулӑр, пурте вулӑр!**

Вӑрнарти йалхуҫайстви технĕккӑмне тыта-тыта «Капкӑнӑм» шӑлт пӑсӑлчĕ. Улатӑра кайса капкӑна тӳрлетмелле пулчĕ. Халĕ капкӑн лайӑх ĕҫлет. Каллех тĕрлĕ шампа хырӑмсене, ҫын йунне ĕҫекенсене, ĕнсе хыҫĕнчисене тытма пуҫлӑпӑр. Кĕрĕҫ. Кĕмĕҫ, теместпĕр.

— Лартарха капкӑна ҫакӑнта.

Шарт! турĕ капкӑн. Хӑрасах карӑм. Шуркасси турӑ копператтивĕ ҫакланнӑ! Тискер, хӑрушӑ кайӑк, икĕ пуҫлӑ „ҫвер“. Пĕр пуҫĕ чиркӳ старӑсти Йехрем Елексейчĕ, тепĕр пуҫĕ псаломшчĕк Макҫӑм пуп кĕрӳшĕ. Кун пек «ҫвер» курманнипе Шуркасси чухӑнне Майака чĕнсе илтĕм.

— Мĕнле йапала ку? тетĕп Майак вара ӑнлантарса пачĕ. Шуркасси копператтивĕнче турӑ ҫыннисем лараҫҫĕ. Прикасчĕкре чиркӳ старӑсти, счетовотра псаломшчĕк. Пуйансене йӳн хакпа, чухӑнсене пысӑк хакпа таварсем сутаҫҫĕ, терĕ

Е, апла пулсан ку «ҫвере» лайӑхах тытасха, тесе икĕ пуҫлӑ «ҫвере» капкӑнран хӑтарса капкӑн картиве кĕртсе йатӑмӑр.

— Шарт! турĕ капкӑн. Патĕрйел уйесĕнчи Алманчӑ пупĕ Топросмыслӑв ҫакланчĕ! Вӑт шеремет, кун пек шампасене нумай тытнӑ, йӑлӑхтарчĕҫ ĕнтĕ тесе капкӑнран кӑларса ҫырмана ывӑтсах йарасшӑнчĕ.

— Ҫук, ҫырмана ӑна ап ывӑтха, вӑл турӑ ĕҫĕпе ҫакланман, акатуй ĕҫĕпе ҫакланнӑ терĕ Алманчӑ «сӑпси».

— Мĕнле апла?

— Алманчӑра акатуй пулчĕ. Ҫак акатуйра пуп Топросмыслӑв та хӑй кĕсри ҫине утланса тутарсемпе сĕрен йачĕ, терĕ «Сӑпса».

— Ха-ха-ха! Сĕрен йаракан пуп ҫукчĕха пирĕн... Ку „ҫвере“ капкӑн картине кĕртетпĕр.

— Шарт! турĕ капкӑн. Пӑхатӑп, хам куҫа шӑлатӑп, ĕненместĕп. Капкӑнра Иван мучи тӑрат̆! Мĕнле капла? Иван мучи хӑй шампа хырӑмсене аллат̆, халĕ хӑй капкӑнра «шампа хырӑм» пулса тӑрат̆, тетĕп.

Унчен те пулмарĕ, тискер сасӑпа Иван мучи кӑшкӑрса та йачĕ:

— Урӑх нихӑҫан та тумӑп, кӑларӑр капкӑнран... Ай-ай-ай! тесе ахӑрат̆.

Пысӑк «ҫвер» Иван мучи. Хӑй „ҫверсене“ тытакан „ҫвер“. Хӑранипе урасем чĕтресех кайрĕҫ. Кӑларас ку „ҫвере“ капкӑнран, атту хама та ҫисе йарĕ, терĕм.

Капкӑнран кӑларсан Иван мучи мӑн алине ман хулпуҫҫи ҫине хучĕ те:

— „Капкӑн“ шурналра шӑршӑ-маршӑсене сахал ҫутатнӑшӑн капкӑна ҫаклантӑм, терĕ.

Епĕ ҫамрӑк капкӑнҫӑ:

— Е! тесе анчах йултӑм вара...

Иван мучи хыҫҫӑн капкӑна претҫетаттĕлсем кĕре пуҫларĕҫ. Темиҫе претҫетаттĕл кĕчĕ. Хаҫ вĕсем ҫинчен каламастӑпха. Тепĕр вӑхӑтра калӑп.

Капкӑнҫӑ.

# „Ҫапкăноскоп“.

Ĕнер „Капкăн“ ретаксине пĕр ҫын пырса кĕчĕ. Хулпуҫҫи айне пĕр чăмăртаклă йапала чăркаса чикнĕ.

Капкăн хуҫи ҫав чăмăртак ҫине чалăшăн пăхса илчĕ те шухăша карĕ: „ку чăмăртак хаҫат ваҫҫи ҫырнă йапала пулсан, корҫинкка пăрахмалласкер ҫеҫ пулмалла. Шурнал ҫине ӳкерме тунă карттинккă пулсан, шурнална мĕн пысăккĕш кăлармалла пулаҫ,—ăна шурнала кĕртес пулсан, тӳшек ҫиттинчен те пысăкрах кăлармалла пулаҫ шурналне,—укҫа ҫитес ҫук ун пысăккĕш шурнал кăларма“.



Анчах хайхи килнĕ ҫын Капкăн хуҫи шухăшне туйса илчĕ пулмалла та, ҫапла каларĕ:

— Ҫĕмĕренрен хăравă пек ан хăрăрха манран. Ку чăмăртак „Сунтал“ ваҫҫи ҫырнă ҫтихсен чăмăртакĕ мар. Ун пысăккĕш ҫтихсене вуланă чухне куҫсем ҫамка ҫине хăпарса ларĕҫ. Карттинккăсем те мар вăл чăмăртакра. Ун пысăккĕш карттинăсене „Капкăна“ ӳкерсен лашасем хăраса айаккалла тарса пĕтĕҫ. Ку манăн парне. „Капкăн“ ваҫҫи парне илсе килтĕм. Капкăн хуҫи, ил ăна. Вăл йапала саншăн пит усăллă пулĕ.

Килнĕ ҫын хайхи чăркана салтрĕ те, «Капкăн» хуҫине пĕлĕт ҫинчи ҫăлтăрсене пăхмалли трупа йевĕрлĕ йапала пачĕ.

— Кăна епĕ шухăшласа кăлартăм. Йатне „Капкăноскоп“ тесе йат патăм. Вăл йапала хăйаматла лайăх йапала. Ҫакăнтан пусатăн та, ҫах тӳмене ҫаврса лартатăн та, ҫакăнтан пăхатăн. Пăхха ĕнтĕ. Тĕнчере мĕн-мĕн пурри пурте курăнаҫ,—уҫ тупанĕ ҫинчи пекех.

Капкăн хуҫи хаҫхи йапалана илчĕ те, ҫын каланисене пĕтĕмпех турĕ. Хĕпĕртенипе ҫăварĕнчи сурчăкĕсене лăнк! ҫăтрĕ.

— Ну-с, пăхăпăр. Канаш стантси йеннелле пăхсан та йураҫ. Ав, Шăхасан вулăсĕнчи 2-мĕш Хурамалти копператтива ревиҫи тăваҫҫĕ. Йăван Йакурчăн Иҫҫипе Елекҫи Илйин йăтă пек йĕреҫҫĕ. Иҫҫийĕ копператтив укҫине 32 тенкĕ салатнă, Иҫҫинĕ—91 тенкĕ. Чаплă копператтăрсем. Чусăнккăсем пур, кĕске кутлă ҫĕнĕ пиншаксем пур, хĕрсем йуратаҫҫĕ, укҫа ҫук. Вĕҫнĕ укҫа! Копператтив укҫипе лайăх тумланса ҫӳренĕрен вĕсем ҫине „куҫ ӳкнĕ“ пуҫ.

Халĕ тата Пагăрйел уйесĕнчи Аслă-Арапуҫ йеннелле пăхăпăр. Охо! Кунта ĕҫке йараҫҫĕ. Милитсионер та ĕссĕр (Каҫал вулăсĕнче пурнаканни), йал претҫетаттĕлĕ те ĕссĕр. Савинов милитсионер, парттире пулнă ҫын, хăй ачине пупсемпе тĕне кĕртнĕ. Тĕне кĕртнĕ йачĕпе икĕ кунлăх ĕҫкĕ тунă. Хăнисем малта, сĕтел хушшинче ларҫҫĕ, хуҫи лараҫ сăра умĕнче, чĕтвĕрчĕ лараҫ милитсин чăркуҫҫи ҫинче.

Пăхăпăр тата Турай вулăснелле. Анаткас йалсовечĕ пупран пиллĕх илсе



исполниттĕлсене ун вӑђђи ҫӑмарта пухма хушнӑ. Исполниттĕлсем тĕлĕнеҫҫĕ: Совет влаҫĕ пупсем майлӑ кайаҫ̆ҫке, теҫҫĕ.

Нуккӑ тата ҫывӑхри вырӑнсенче мĕн курӑнаҫ̆. Кĕтеселле пӑхӑпӑр. Ав, Шупашкарти Комунхос пуҫлӑхĕ „Канаш" хаҫат вулаҫ̆. Кайпулккӑ ҫинчи кĕпер ҫинчен вулама тытӑнчĕ. Ай уй! Пит ҫилленсе кайнӑ. Хӑвӑртрах ӑстаҫӑсене чĕнсе илчĕ те ҫав йапӑх кĕпере тĕпĕ-йĕрĕпех пӑсса тӑкма хушрĕ. „Малашне ҫав кĕпер вырӑнне ылханатӑп. Етем ӑрӑвĕ пĕтиченех ҫав вырӑнта кĕпер ан пултӑр, терĕ. Вара ӑстаҫӑсем „Канашра" йурӑхсӑр тесе ҫырнӑ кĕпере куҫран ҫухатма карĕҫ. Вӑл вырӑнта чул ҫинче чул та йулман,—пĕтĕмпех тасатса лартнӑ. Кайпулккӑ ҫинчи кĕпер ӑҫта пулни ҫинчен суккӑр кĕслеҫĕсем сӑвӑсем туса йурлаҫҫĕ, кӑмака ҫинчи карчӑксем йумах йарса кӑтартаҫҫĕ. Ĕнерхи каҫ пĕр хĕрĕнкĕрех ҫын ҫав ҫук кĕпере шыраса ҫырмана анса кайнӑ.

Капкӑн хуҫи пӑхма чарӑнчĕ. Килнĕ ҫынна алӑ парса ҫапла каларĕ:

— Тавтапуҫ сана. Есĕ шухӑшласа кӑларнӑ йапала маншӑн пит усӑллӑ. Мĕнпе сана тавӑрам ҫав ырӑ йапала панӑшӑн? Сӑнна шурнала ӳкереми, йе пурнӑҫу ҫинчен ҫырса халӑха пĕлтереми?

— Ҫук, кирлĕ мар,—тет килнĕ ҫын. Епĕ сана хисеплекен ĕҫлекен. Чапшӑн та мар, укҫа-тенкĕшĕн те мар шухӑшласа турӑм епĕ вӑл йапалана. Хам шухӑшласа тунине ҫынна пĕлтерес мар тетĕп.

Килнĕ ҫын алӑксене уҫрĕ те тухса карĕ. Вӑл алӑкран тухсанах Капкӑн хуҫи ачисем ҫав йапалана курасшӑн ҫапӑҫмах тытӑнчĕҫ. Пĕри калаҫ̆: епĕ пӑхап!—тепри калаҫ̆: ҫук, епĕ пӑхап!

— Акӑ мĕн, ачамсем,—терĕ Капкӑн хуҫи.—Ку йапалана халĕ сĕтел арчине питĕрсе хурам. Курма ĕлкĕрĕрха.

Ҫавӑнтан вара «Капкӑн» хуҫи респуплĕкра мĕн пулнине пурне те пĕлсе тӑма пуҫларĕ. Пурне те пĕлет пĕр турӑ, теҫҫĕ айвансем, пурне те кураҫ̆ „Капкӑн" хуҫи, теҫҫĕ вулакансем.

Йӑван Мучи.

---

## Икĕ тус.




Ес те лайӑх ӳсĕртен,
Еп те лайӑх тилпĕрен.
Ес те ман тус чĕрĕ чух
Еп те сана манас ҫук.

## Вулĕҫтӑвкомра.

— Ей, Ваҫлей, есĕ ма кунта чĕлĕм туртатӑнха? Пĕлетĕни есĕ Уĕҫтӑвкомӑн йанварти опесатеђнӑй постановленине? Учрештенинче туртнӑшӑн 10 тенкĕ штрав.

— Е ей, есĕ, ухмах, ӑна та ку таранчен пĕлместĕнҫкеха. Унта: «не курение табаку воспрещается, за неисполнение в 10 руб. штраф» тес вырӑнне ҫекреттарĕ йанӑш: «курение табаку воспрещается, за неисполнение в 10 р. штраф» тесе ҫырнӑ лартнӑ тет. Епĕ ĕнер анчах Уĕҫтӑвкомра пултӑм. Унта слушӑшчисем штрав тӑвасран хӑраса ĕҫленĕ чухне тапак тĕтĕмне, сысна ĕнтнĕ чухнехи пек, мӑкӑрлантарса лараҫҫĕ. Е-е, терĕм вара, пирĕн ҫекреттар йанӑш ҫырса лартниҫ. Арӑмĕпе вӑрҫнӑ вӑхӑтра ҫырнӑ пуђ, терĕм.

Н. Йӳшшунĕв.

# Сĕм вăрман.

(Чăн пулнă майлах).

Раççейре чи илемлĕ йал пур—илемлĕ пахчасем йал хушшинче, йал варринче илемлĕ пĕве, пĕви йĕри тавра шур хурăнсем,—йалĕнчи çынсем, çĕр ĕçĕсĕр уçне, сăмакунккă ремеслипе те хăтланаççĕ.

Пĕрре çав йалта пур краштăнсен пуххи пулнă.

— Православнăй христиансем,—тенĕ çутă сехетлĕ пĕр хресчен,—йалхуçайствине ура çине тăратас тесен, сăмакунккă нумайрах тума тăрăшмалла. Сăмакункă вăл—сăмакунккă,—сăмакункă тумасан епĕр пурнăçа хўринчен тытса илеймĕпĕр. Чи малтан пирĕн пĕрлешў тумалла. Пĕрлешўре вăй, теççĕ поҫшевиксем. Йалĕпе сăмакунккă сойусĕ тăвăпăр...

— Ревиçи килсен пушар чанне çапмалла, тет тепĕри.

— Чăн сăмах. Хурал чанне мар, леш, 100 пăтлине çапмалла.

— Çук, апла йурамасť. Чан çапсан ревисор мурсем сисме пултараççĕ. Черетлĕ хурал тăратмалла. Килнине курсанах хурал шаккине шакkaса çўремелле йал тăрăх. Ма шаккаттăр тесен, вăрăсенчен шикленетпĕр темелле.

* * *

Çав йалта сăмакунккă пĕçерни çинчен влаçсемириснĕ. Ревисорсене йанă хуларан. Лоп!! пырса кĕреççĕ хĕрĕнчи пўрте. Пўртрисем алăкне уçмасăр тăраççĕ малтанах. Уçаççĕ. Кĕреççĕ. Пўрт хуçисем каçхи апат çисе ларнă иккен нимĕн сасчў те çук пўртре. Ват мучи йĕксў килнипе йак! туса илет те ревисорсене ал парса тухаť.

— Есĕр сăмакунккă пĕçернĕ. Сывлăшра шăрши пур, тенĕ ревиçи.

— Çук. Сăмакун шăрши мар вăл. Ĕне кучĕ хуртланнăчĕ те, нашатырнăй çпирт илнĕчĕ—çавăн шăрши пуҫи анчах, тет тепĕр хут йак! туса ват мучи.

— Çук. Пĕçерни паллах. Ав, унта пĕр лачака шыв выртаť. Сăмакунккă вăл.

— Çук, пĕлеймерĕн, тет Упрам мучин ывăлĕ.—Вăл шыв пĕчĕк ачаран пулнă. Чирлĕ ача пур. Çав çаплах упаленсе йĕпетсе çўрет.

Ревиçи кукҫанса ларса шăрпăк чăр! çутса çав лачашкана тивретсе пăхаť. Шыв симĕс çулăмпа çунаť, çпирт пекех.

— Вăл простутăран, тет Наçтўк, ача амăшĕ.—Ача варвиттийе йернĕчĕ. Краççын ĕçтерсе пăхрăм.

Йĕп шыранă пекех шыранă пўрт таврашĕсенче сăмакункка тупайман. Тепĕр çын патне шырама кайнă кўрше.

Шăршă, лачака, тăмпа сапланă куршаксем.

— Вăл куршаксенче епĕр пир хĕретнĕчĕ, тенĕ тепĕр пўртри карчăк. Тухса кайăрах кунтан.

Çав вăхăтра хурал тăма черет çитнĕ çын Тăхтаман лаша çине утланса йал тăрăх икĕ хут шаккаса тухаť. Ревиçи виççĕмĕш пўрте кайаť. Малтанхи пўртри мучи тепĕр хут йак! туса илет те кил йышĕсене калаť:

— Тапратар пуҫ хамăрăн ĕçе. Ревиçи пире тĕрĕслерĕ, урăх килес çук. Каланă, тунă. Тытăнаççĕ сăмакунккă пĕçерме.




Ревиçи 4-мĕш пўрте кайаť, 2-мĕш пўртре сăмакун пĕçерме пуçлаççĕ. Ир патнелле ревиçи 41-мĕш пўртре—39-мĕшĕнче ĕçлеме тапратаççĕ.

— Çук, тытмалла мар, тет ревиçи. Епĕр тухса кайсанах сăмакун йухтарма тытăнаççĕ мурсем. Ав, кураттăри?—пур мăрйесенчен те тĕтĕм мăкăрланса тухаť. Тхву! Ывăнса çитрĕмĕр. Шухăш-

лаť, шухăшлаť те ревиçи тепěр майлă, кайалла, çӳреме тухаť. Каллех çав истори. Ревиçи 39-мěш пӳртре кěрет, 41-мěшěнче ěçлеме тытăнаççě. Ревиçи 38-мěш пӳртре, 40-мěшěнче тěтěм тухма пуçлаť... Ревиçи çилленипе лăч! сурса илет те, çын курман çěре çывăрма кайаť. Çěрле лоп! каллех йала пырса кěрет.

— Халě епěр икě йенчен те тěрěслеме тытăнапăр. Вěсене йал варринче çавăрса илěпěр илěпěрех.

Каллех нимěн те тухмасť. Йал варрине çывхарнă çемěн йалăн икě хěррипчи пӳртсенчен тухакан тěтěмсем вайлансах пыраççě. Аптрамалла

Нимěн тума пěлмесěр вěçтереççě ревисорсем хуланалла. Çыраççě пуçлăхсем патне хут: «сăмакунька пěтерес тесен, кашни пӳртех хурал тăма пěрер член йамалла».

Пуçлăхěсем, ку усалла тымаррипех пěтерес тесе, кашни пӳрте пěрер член кěртсе лартаççě.

Членсем пěрер кун хурал тăраççě, икě кун. Сăмакунккă пěçерекен çук. Виçěмěш кунне йалти çынсем вăрттăн пуху туса çапла постановлени йышăнаççě: „вăрттăн сăмакункă тăвас ěçе сěм вăрмана куçарас. Пире сыхлама кашни йавăç кутнех пěрер член лартаймěç,—членěсем çитес çук“.

Тытăнаççě сěм вăрманта сăмакункă йухтарма. Ревиçи пӳртсенче 10 кун та 10 çěр ларсан, çапла постановлени тăваť: „çак 10 кун хушшинче те пулин йалта сăмакунккă туни курăнмарě. Хресченсем ăса кěчěç“.

— Малтанах çапла кирлěчě, теççě хресченсене ревисорсем.—Кăмăл хуçăлса килет есěр ăса кěнине кура. Килěр, чуп туса тухар сире, теççě.

— Ах, кутӳксем, теççě хресченсем.— Пире тăнсăр теттěри? Шишкă.

## Чăхăпа Крахвине инке.



Крахвине инке. Чăх тусăм! Мěнле, килěшети сана хађхи пурнăç? Лайăх пăхатăпçхе епě сана.

Чăххи. Килěшсех каймасť çав. Лампă вырăнне елекгритсă кирлěчě. Ман çăмартана пуринчен ытла вěреннě халăхсем çийеççě. Кăт-кăтик!

## Пěчěк калаçусем.

— Ей, Миťух! Есě: епě кореспотент теместěнчи.

— Ма, кореспотентçке.

— Еппин сан çырусем мěншěн „Канаш“ çинче тухмаççě. Есě çырнине вуласа курман епě халичен.

— Курман. Мěнле курман? Ав, леш иргнě номěрта тухнăчě, „почтă йешчěкě“ тенě пайра. Епě ěмěрех почтă йешчěкě вађђи çыратăп. Есě çавăнта вула, вара ман саметкăсене курăн.

Утик.

— Мěншěн есě, çăва тěпне каймансскер, ман çинчен ı ртакол çырса карăн? Есě хăна ху: епě претçетаттěл, темěн те тума пултаратăп, тетěн мěн?

— Пěрелěха каçар, Упрам мучи. Шуйтан илěртрě... Епě ун чухнě ӳсěрче... Ӳсěрпе пулчě...

Унтăркка.—Мěнле апла есě? Арăму чирлесен йумăç патне кайатăн. Халě кěсрӳ чирленě те выђăх тухтăрне кăтартасшăн.

Упрам.—Арăм мěн вăл. Карчăк—карчăках ěнтě вăл. Кěсре вилсен пурнăç пěтет. Никам та кěсрене укçасăр памасť.

# „Чаплă хĕручитлĕ Стефенсон“.

Чăн сăмахăн суйи çук.

Чиркӳллĕ Кĕçĕн Шетмĕри хĕручитлĕ Лăриван Васçĕлей хĕрĕ Александрă чапа тухрĕ.

— Мĕнле апла? тейĕр есĕр.

Каласа парам, еппин. Ĕçĕ ак çапла. „Чап“ тенĕ йапала, хăвăр пĕлетĕр ĕнтĕ, пĕрре сиксе тухсан, ĕмĕрех пырать. Пушкĕна, Некрассăва, Кокăҫа илĕпĕр. Вĕсем пĕрре чапа тухнă та чапĕ халĕ те пырать. Йе тата пăраххотсем шухăшласа кăларакана Стефенсона илер. Стефенсон пĕрре пăраххот шутласа кăларнă та чап тунă. Чапĕ халĕ те пырать. Кĕçĕн Шетмĕри хĕручитлĕ Александрă Лăриванăвна çаксене лайăх пĕлсе тăнă.

— Чап кирлĕ мана, чап! тесе кăшкăрсах каланă вăл пĕрре школ стурăшне (хăйĕн йăмăкне), мăнтăр питлĕ Марйене.—Епĕ те Стефенсонран кайа йулмăп, епĕ те унпа тан пулăп. Чап, чап, кирлĕ мана!

Мăнтăр питлĕ Марйи куçне çĕрелле чикнĕ те:

— Есĕ асли, есĕ нумай вĕреннĕ, пурне те пĕлетĕн. Чаплă пулас тесен пулатăнах ĕнтĕ. Хăвăн йатна ĕмĕре чапа хăварсан ман йата та чапа кăлар. Епĕ те чапа йурататăп, тенĕ сăмси айне шăлкаласа хăйĕн аслă йăмăкне Марйе.

Александрă Лăриванăвна, чапа тухасшăн çĕрĕн-кунĕн çывăрмасть. Чапшăн вăл çиме те пăрахрĕ. Ăна та туса пăхать, кăна та тăвать. Чапĕ çук та çук! Пушкĕнпа Стефенсон чапĕсем тĕлĕкре те курăнаççĕ.

Чап, чап, ăçта есĕ çӳретĕн,
Мĕншĕн манран таратăн?

Анчах чап тенĕ йапала вăл курăнса килмест, вăл сасартăк, çиçĕм пек персе çитет. Александрă Лăриванăвнă чапĕ те çаплах сиксе тухрĕ. Пĕчĕк ĕçренех тухса кайрĕ. Ĕçĕ ниме те тăмасть. Уншăн калаçмалли те çук. Анчах чап тухрĕ. Пысăк чап тухрĕ. Стефенсон чапĕнчен те пысăк.

— Мĕнле чап? Ĕретлĕ пул, часрах кала! Мĕн сăмахусене, пăру кĕпе аркине чăмланă пек, чăмласа тăратăн...

— Чичас, чичас! Самантрах калăп... Александрă Лăриванăвнă шкул вуттине вăрласа чапа тухрĕ вĕт! Ак мĕв! 6 лав вутă тийенĕ те каçпа килнелле тĕрлеттерсе анчах пырать...

Ех чап, ех чап,
Акă ăçта вăл чап!



Çапла пулать çав вăл. Çын ĕçлет, тертленет. Стефенсон пек пăраххот шутласа кăларса чапа тухас тет. Кĕтет. Ĕçлет. Кĕтсе ывăнать. Кĕтме те пăрахать. Унтан сасартăк чапĕ сиксе те тухать. Чап вăл, мур, телей пекех вăрттăн çӳрет.

Александрă Лăриванăвнă çапла чапа тухрĕ. Вăл Стефенсон пек пăраххутне шутласа кăлармарĕ пулсан та «пăраххутне» хутма вутă тупрĕ.

Чăп сарăлать. Александрă чапĕ те сарăлчĕ. Сарăлнă майĕпе Александрă чапĕ «Капкăна» та пырса кĕчĕ.

Александрă Лăриванăвна,
Çиленсе мар сан çине
Йатна йанă çын çине,
Шкул ачине шеллесе,
«Касна» мулне сыхласа,
Сана чапа кăларнă!

Капкăнçă.

# Ҫулăшсем.

— Васли ăҫта ҫăва тĕпне кайса кĕчĕ ҫав.

— Йерҫейместĕп, ĕҫ нумай тег.

— Мĕн тăваӗ апла вăл?

— Хĕрсем ҫинчен токлат тума хатĕрленет. Ӗнер каҫпа тухса карĕ те, халĕ те таврăнайман. Варук аппа патĕнче токлат туса лараӗ пуҫха. Пĕчен ҫĕрте Варук ун токлатне итлеме йуратаӗ пулмалла.

* * *

— Мĕншĕн сирĕн копператтивра тавар сахал?

— Правленине тепĕр ернерен суйламалларан. Кирек хăҫан та вăл ҫапла, малтанах нумай, кайран ытла та сахал.

Тепĕр ик ернерен:

— Мĕншĕн сирĕн копператтивра нимĕнле тавар та ҫук.

— Нумай пулмасӗ ҫĕнĕ правлени суйланăран. Паллă ĕнтĕ: ҫĕнĕ шăпăр таса шăлаӗ!



Усĕрĕлсе ҫӳрекен ҫын. Сăмакунккăпа кĕрешес тесен ҫакна пĕлмелле: „40-хĕрĕхшер 140 пулмĕ“.

Урри. Мĕне пĕлтерет вăл?

Усĕрри. 40 кратуслине 40-шер пуса сутсан Уколовнăй котексăн 140-мĕш статйипе айăпланакан пулмĕ.

Урри. Апла мар—сăмакунккă тăвакансене 40 хут хĕрĕх кунлăх тĕрмене лартмалла, вара 140 пулмĕ.

Копператтивра нихăҫан та кирлĕ таварсем пулман: хĕлле сахăр кирлĕ пулнă пулсан—урапана сĕрмелли ҫу—ҫеҫ пулнă. Сăран атă кирлĕ — ҫăматăсем нумай.

— Ма есĕр апла сутă тăваттăр? Апла сирĕнтен никам та тавар илес ҫукҫке.

— Илес килмесен ан илчĕр. Хамăра ваҫҫи нумай йулĕ.

# Ҫомсомолĕс хĕреспе ҫӳрет.

Ҫĕнĕ Ейпеҫри (Шăмалак вул.) РҪЛКС йачейккивчи член Шурт Йакку Васлийĕ кăҫал мăнкун ернинче пупсем иккĕнсемпе килсен, вĕсем хыҫҫăн хĕрес йатса пуп ваҫҫи сăмартасем пуҫтарса ҫӳрерĕ. Васили комсомола 24 ҫулта ҫулла кĕчĕ. Вăл ҫыру аван пĕлекен ача, кĕнекесем те вулакалаӗ, турă ҫинчен те аван пĕлет, анчах ҫапах та ҫакăн пек ĕҫсем туса йалти йачейккă йатне ҫĕртсе ҫӳрет.

„Капкăна“ ҫаклатса комсомолран кăларас пулаӗ.

Йалти ҫамрăк комсомолĕс.



## Атăл хĕрринче.

Лавкаҫă патне пĕррелескер пырса тăчĕ.

— Е..есĕр мана ыранчен кĕтмелле пирус параймăрши?

— Ҫук ҫав, пама пултараймастăп, «кредита нет»!

— Мушт есĕр, епĕ кам иккенне пĕлместĕр пулĕ...епĕ помошнĕк начаҫнĕка Укăлросыска!

— Аха... пошалуйста... мĕнле пирус кирлĕха вара?..—

— Пушки! — Пăркăҫ.

# Тупмалли халлап.

«Ч па йу атаканçене савса çырап».

Пĕрре, Чăваш оплăçĕнче, пĕр «Христос турă» çăлса, çылăхсенчен сыхласа тăракан уйесре, претçетаттĕл пулнă, тет. Йатне, (епĕ тĕнчере нумай претçетаттĕл куркаланă, пурне те астусан пуç та çитес çук) халĕ маннă, кайран астусан тепринче çырăп.

Анчах претçетаттĕлпе претçетаттĕлĕн уйрăмĕ пур. Ку, вырăсла каласан «просто» претçегаттĕл пулман, вăл вун-пилĕк хутлă претçетаттĕл пулнă. Акă итлĕр:

— Уĕçтăвком претçетаттĕлĕ,—пĕрре.

— Ранен пулнисене пулăшакан комиççин претçетаттĕлĕ,—иккĕ,

— Хула копператтивĕн,—виççĕ,

— Инвалитсен копперат.,—тăваттă,

— Пахча çимĕç комиççин,—пиллĕк

— ОДН (хут пĕлменнисене вĕрентме тăрăшакан опществă),—улттă.

Тата Рапклупра, Суйлав Комиççинче, Çар Комиссарĕнче, ытти çĕрте те тăнă. Пурне те шутласа кăларас çук.

Вăт, вулакансем, тупăр:

— Йепле çав 15-хутлă претçетаттĕл, 20 вырăнлăскер, ĕç тума ĕлкĕрнĕ, çавăн ĕçĕнче пур тĕлте те усă пулнăши, çавна тупса каласа паракана хамран Шупашкара пырсан пĕрре Оплсойус столовăйне илсе кайса апат çитерме пулап.

Тата. Пирĕн оплăçра уйессем тăваттах. Хăш претçетаттĕл иккенне пĕлмелле.

Кашăк.

# Иван—йал сутакан.

Шĕнер пуç вулăсĕнчи пĕр йалта Влатимĕрăв Иван й.-х. копператтивĕ уçнă, членсем—хăйĕн хурăнташĕсем, тата вилнисен йатне çырат.

Çыру.

Йалĕ Каран, çынни Иван;
Йалти чухăнсен йачĕпе.
Йалхуçайствине йусас йĕркепе
Çак Иван (харсăр хăй куран)
Копператтив уçат;
Уçат те ĕçе тытăнат.
Хăйĕн майрине лартат лавккине:
— Сана, савнă мăшăрăм,
Килĕшулле пулĕ çак вырăн.
Пулсам прикашчăтсă
Чухăнсене сума сначăтсă...
А сана, тăван, касначей тăвам,—
Тесе лартат кĕртсе
Хăйĕн тепĕр хурăнташне,—
— Пурăн еп пур чухне!
Çапла майлăшрĕç,
Виççĕн пĕр чышкă пулчĕç.
Анчах копператтав пушах.
Иван шухăшлат
Çĕнĕ мел шырат.
Тупрĕ: вилнисене тытат те çырат,
Пайевойне вĕсемшĕн хăй хурат.
Тата усламăççене
Суту-илу тумашкăн
Ĕнентеру çырса парат.
Унтан укçа хăпатат.
— Апла пулсан вăл Иван
Сутсах йарĕха Карана...

Ç-и.

Чуващоблит № 1224. Чебоксары, Тип. Чувашиздата.